27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
НОЯБРЬ
15
ЮНКУН
225(6720) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Колхоз тимӗрҫи

Пирӗн ҫӗршывӑн ялхуҫалӑхӗ чи шултӑра та чи механизациленӗ ялхуҫалӑхӗ пулса тӑрать. Сталинла пилӗкҫуллӑхсем вӑхӑтӗнче пирӗн социализмлӑ ялхуҫалӑхе пиншер тракторсемпе комбайнсем, ялхуҫалӑхӗнче кирлӗ ытти машинӑсем нумай илчӗ. Отечественнӑй вӑрҫӑн ҫулӗсенче те, фронт валли хӗҫпӑшалпа тӗрлӗ машинӑсем ытларах туса кӑлармалла пулнӑ вӑхӑтра та, социализмлӑ промышленность ялхуҫалӑхне тӑтӑшах тӗрлӗ машинӑсем парса пулӑшса тӑрать.

Паллах ӗнтӗ, колхозӑн машинӑсем мӗн чухлӗ ытларах, вӗсемпе мӗн чухлӗ тухӑҫлӑнрах усӑ курассӗ, колхозниксен ӗҫӗ те ҫавӑн чухлӗ ҫӑмӑлтарах, тухӑҫлӑрах пулать. Анчах машинӑсемпе туллин усӑ курас тесен, вӗсене тӗрӗс-тӗкӗл тытса усраса яланах ӗҫре усӑ курмалла тӑвас тесен, ҫав машинӑсене сыхласа усрама, пӗлсе усӑ курма тата кирлӗ чухне юсама тӑрӑшмалла. Пур чухне те ҫӗнӗ те юсавлӑ машинӑсем кӗтсе ларма май ҫук. Пирӗн машинӑсем нумайланчӗҫ пулсан, вӗсенчен хӑшпӗрисем пӑсӑлма та, кивелме те тивӗҫлӗ. Апла пулсан, пирӗн вӗсене юсаса ӗҫе яма, кирлӗ чухне ҫӗнетме тӑрӑшас пулать.

Ҫак енчен илсен, колхозсенчи тимӗрҫӗ лаҫҫисем ялхуҫалӑхӗнчи хӑйне майлӑ «индустри», хӑйне майлӑ мастерской пулса тӑраҫҫӗ. Ялхуҫалӑхӗнчи ҫӑмӑл машинӑсене юсас ӗҫре вӗсем калама ҫук пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Ку ҫеҫ те мар, колхозсен тимӗрҫӗ лаҫҫисем трактор бригадисемпе комбайнсен агрегачӗсене те пысӑк пулӑшу пама тивӗҫлӗ. Колхозри тимӗрҫӗ лаҫҫинче ялхуҫалӑх машинисене юсас ӗҫе кӑна мар, тата ытти чылай ӗҫсене те тума пулать. Колхозӑн урапи-ҫунине юсас, колхоз хуҫалӑхӗнче кирлӗ пулакан тӗрлӗ хатӗрсем: сенӗксем, кӗреҫесем, пуртӑсем, ҫуртйӗрсен тимӗр пайӗсене тата колхозниксене килте кирлӗ хатӗрсем тума пулать. Ҫапла вара колхозӑн тимӗрҫӗ лаҫҫи питех те кирлӗ хушма хуҫалӑх пулса тӑрать.

Ахальтен мар ӗнтӗ ялхуҫалӑхӗнче малта пыракан кирек хӑш колхозӑн та, ялан тенӗ пекех, лайӑх ӗҫлекен тимӗрҫӗ лаҫҫи пур. Ҫавӑн пек колхозсен ялхуҫалӑх машинисем нихҫан та юсавсӑр лармаҫҫӗ, вӗсем яланах ӗҫре. Ҫавна пула вара колхозри ӗҫсем те хӑвӑрт та кал-кал пулса пыраҫҫӗ.

Ҫапах та, тӳрех каламалла, нумай колхозсенче тимӗрҫӗ лаҫҫисен ӗҫне тивӗҫлипе йӗркелесе яман-ха. Колхозсен ертсе пыракан работникӗсем кӑна мар, ВКП(б) райкомӗсемпе райисполкомсем те тата ҫӗрӗҫ органӗсем те колхозсенчи тимӗрҫӗ лаҫҫисен ӗҫӗпе сайра хутра кӑна интересленеҫҫӗ. Чылай колхозсенче тимӗрҫӗ лаҫҫисем пачах хупӑнса лараҫҫӗ. Ҫакна вара час-часах тимӗрҫӗ ҫуккипе ӑнлантарма пӑхаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах тимӗрҫӗсем вӗрентсе хатӗрлес тӗлӗшпе нимӗн те тумаҫҫӗ. Колхозсен тимӗрҫӗ лаҫҫисенчи ӗҫе кирлӗ пек организациллеме те тӑрӑшмаҫҫӗ.

Ялхуҫалӑх артелӗн уставӗ кӑтартса панӑ тӑрӑх, колхоз тимӗрҫӗ лаҫҫинче хӑйӗн пӗр-пӗр членне ӗҫкунӗсем парса ӗҫлеттерме тивӗҫлӗ. Колхозра тимӗрҫӗсем ҫук пулсан, вӑл урӑх ҫӗртен килнӗ ҫынна тара тытса ӗҫлеттерме пултарать. Анчах капла тунӑ чухне те колхоз тимӗрҫе ӗҫкунӗсем ҫырса памалла, ӑна сдельщинӑпа ӗҫлеттерсе, ӗҫ тӑрӑх тӳлемелле. Ҫак йӗркене вара нумай колхозсенче пӑсаҫҫӗ. Колхоз правленийӗсем тимӗрҫӗсене тара тытаҫҫӗ те уйӑхсеренех 6, 8, 10 пӑт тата ытларах та тырӑ парса тӑраҫҫӗ. Тимӗрҫӗн ӗҫне шута илсе мар, унпа уйрӑмӑн калаҫса татӑлнӑ тӑрӑх тӳлеҫҫӗ. Тимӗрҫӗ ӗҫлет-и, ӗҫлемест-и, унӑн ӗҫ пахалӑхӗ лайӑх-и, начар-и, — ҫакна шута илмеҫҫӗ. Ҫак йӗркесӗрлӗхпе усӑ курса вара, хӑшпӗр тимӗрҫӗсем ютран заказсем йышӑнаҫҫӗ те колхозсемпе колхозниксенчен калама ҫук нумай тырӑ е укҫа-тенкӗ шыраса илеҫҫӗ. Пӗр-икӗ тӗслӗх илсе кӑтартатпӑр. Комсомольски районра 42 колхозра тимӗрҫӗ лаҫҫисем пур. Вӗсенчен 35 лаҫҫи ӗҫлеҫҫӗ, ҫаксенчен 9 колхозри тимӗрҫӗсем ӗҫленӗшӗн ӗҫкунӗсем мар, тырӑ илсе тӑраҫҫӗ. Ҫӗрпӳ районӗнче 76 колхозран 35 колхозӗн тимӗрҫӗ лаҫҫисем пур. 24 колхозра тимӗрҫӗсем тара кӗрӗшсе ӗҫлеҫҫӗ, вӗсенчен 14 тимӗрҫи кашни уйӑхрах 7—10-шар пӑт тырӑ илсе тӑраҫҫӗ. Ҫак районри «Пионер» колхоз правленийӗ хӑйсен колхозӗн членӗпех договор тунӑ. ҫав договор тӑрӑх, колхоз тимӗрҫе ҫулталӑкра 1000 ӗҫкунӗ ҫырса памалла, кашни ӗҫкунӗ пуҫне икшер килограмм тырӑ памалла. кунсӑр пуҫне тата пӗр ӗне памалла. Ҫапла вара ҫак тимӗрҫӗ ҫулталӑкра 2.000 килограмм е 125 пӑт тырӑ тата пӗр ӗне илет. Ку районри Буденный ячӗпе тӑракан колхозра та тимӗрҫе, вӑл ҫак колхозӑн членӗ пулсан та, уйӑхне 8-шар пӑт тырӑ парса тӑраҫҫӗ. Ҫакна ӗнтӗ йӗркеллӗ теме пулать-и-ха? Паллах, йӗркеллӗ теме пулмасть. Сӑмах та ҫук, тимӗрҫӗ ӗҫӗ—ҫӑмӑл ӗҫ мар. Унӑн ӗҫӗ—йывӑр та кӑткӑс ӗҫ, вӑл чылай пӗлӳ тата мастерлӑх ыйтать. Апла пулсан та, ялхуҫалӑх артелӗн уставӗ тимӗрҫӗсемшӗн те закон пулса тӑмалла. Ҫакна уйрӑмӑнах халӗ, вӑрҫӑ йывӑрлӑхӗсене пула кашни килограмм тырӑ ылттӑн пекех хаклӑ пулнӑ вӑхӑтра, асра тытас пулать. Вӑрҫӑ йывӑрлӑхӗсемпе усӑ курса колхоз тыррине нумайрах илме тӑрӑшакан тимӗрҫӗ хӑйӗн колхозӗн членӗсем умӗнче пысӑк айӑпа кӗрет.

Колхозсенчи тимӗрҫӗ лаҫҫисен ӗҫне лайӑх йӗркелесе ярас тесен, пуринчен малтан тимӗрҫӗсем вӗрентсе хатӗрлес ӗҫе организацилемелле. Ҫак ыйтӑва пуҫарса ярсан, хӑшпӗр юлташсем час-часах курссем организацилеме ыйтаҫҫӗ. Паллах, курссем организацилени кирлӗ, вӑл ыйтӑва республикӑри Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ шута илме тивӗҫлӗ. Анчах курссем ҫине кӑна шанса ларни те тӗрӗс мар пулнӑ пулӗччӗ. Кашни районрах вуншар тимӗрҫӗ ӗҫлет. Вӗсен кашнин ҫумне пӗрер ҫамрӑка ҫирӗплетсе вӗрентсен те, тимӗрҫӗсен йышӗ икӗ хут ӳсет. Ҫапла вара кашни районах хӑйне валли кирлӗ чухлӗ тимӗрҫӗсем вӗрентсе хатӗрлеме пултарать. Кӑна тума ытлашши вӑй хуни те, ытлашши нумай укҫа-тенкӗ тӑкаклани те кирлӗ мар. Апла пулин те районсенчи организацисем ҫак ӗҫе йӗркелесе яма тӑрӑшмаҫҫӗ, тимӗрҫӗсем таҫтан аякран килессе кӗтсе лараҫҫӗ. Кун пек юрӑхсӑр йӑлана пӗтерес пулать. Унпа пӗрлех тимӗрҫӗсен ӗҫне шута илес, вӗсене ӗҫшӗн тӳлес тӗлӗшре те тивӗҫлӗ йӗрке туса хумалла. Тимӗрҫӗсен ӗҫ нормине, вӗсене ӗҫшӗн мӗн чухлӗ тӳлемеллине палӑртса, колхоз пухӑвӗнче ҫирӗплетмелле.

Тимӗрҫӗ лаҫҫи лайӑх ӗҫлетӗр тесен, унта ӗҫлеме кирлӗ хатӗрсем ҫителӗклех пулмалла, вӗсене лайӑх сыхласа усрамалла. Ку тӗлӗшпе те колхозсенче ҫитменлӗхсем пур-ха. Хӑшпӗр тимӗрҫӗ лаҫҫисенче ӗҫ хатӗрӗсене тирпейлӗ тыткаламаҫҫӗ, вӗсене вӑхӑтра юсаса тӑмаҫҫӗ. Тимӗрҫӗ лаҫҫисенче чылайӗшӗнче вара ӗҫ хатӗрӗсем ҫитмеҫҫӗ. Ана пӗлсе тӑраҫҫӗ пулин те, районсенчи организацисем вырӑнти майсемпе усӑ курса ҫав хатӗрсене туса кӑларас ӗҫе организацилемеҫҫӗ.

Республикӑри колхозсем кӑҫалхи ялхуҫалӑх ӗҫӗсене ӑнӑҫлӑн вӗҫлерӗҫ. Халӗ колхозсем умӗнче килес ҫуракине большевикла хатӗрленсе кӗтсе илес задача тӑрать. Ҫуракине ӑнӑҫлӑн ирттересси, чылай енчен, эпир ялхуҫалӑх машинисене пурне те тата лайӑх пахалӑхпа юсаса хатӗрленинчен килет. Ҫак ӗҫре вара колхозсен тимӗрҫӗ лаҫҫисемпе вӗсенче ӗҫлекен тимӗрҫӗсем пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ. Ҫавӑнпа та кашни колхозӑнах май пур таран тимӗрҫӗ лаҫҫи усма тӑрӑшмалла, вӑл пур пулсан, унти ӗҫе тивӗҫлипе йӗркелемелле. Колхозсен тимӗрҫисем халех ӗнтӗ вӗсем мӗнле машинӑсем тата миҫе юсамаллине, хӗш вӑхӑт тӗлне юсаса хатӗрлемеллине пӗлсе тӑмалла. Ялхуҫалӑх машинисене вӑхӑтра юсаса хатӗрлес майпа, колхозсенчи тимӗрҫӗсем хушшинче социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса пымалла.

ҪУЛПУҪ МӖНЛЕ ХУШАТЬ, ҪАПЛА ӖҪЛӖПӖР

ҪӖРПӲ, ноябрӗн 14-мӗшӗ. (Телефонпа). Ҫак кунсенче «Емӗт» колхоз членӗсем колхоз правленине пухӑнса, Сталин юлташ Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци 27 ҫул тултарни ҫинчен тунӑ доклада тата унӑн ноябрӗн 7-мӗшӗнче кӑларнӑ приказне сӳтсе-яврӗҫ. Пухура пӗтӗмпе 50 ҫын пулчӗ. Партин пуҫламӗш организацин секретарӗ Иванов юлташ Сталин юлташ докладне тӗплӗн вуласа ӑнлантарса пачӗ.

«Паянтан пуҫласа пирӗн ҫӗршыв фашистла ирсӗрсенчен пӗтӗмӗшпех тасалчӗ...» Сталин юлташӑн сӑмахӗсене тепӗр хут аса илтерет докладчик. Ҫак чаплӑ сӑмахсене совет халӑхӗ виҫӗ ҫул ытла кӗтсе пурӑннӑ. Кӗтнӗ ӗмӗт ҫитни кашнин чӗрине савӑнтарать.

— Эпир кӑҫал вӑйлӑ тырпул туса илсе, ӑна ӑнӑҫлӑн пухса кӗтӗмӗр. Тӑван Хӗрлӗ Ҫара пиншер пӑт тырпул тата пахча-ҫимӗҫ парса пулӑшӑпӑр. Ҫулпуҫ мӗнле хушать, ҫапла ӗҫлӗпӗр,—теҫҫӗ колхозниксем пӗр шухӑшлӑ пулса.

Пуху вӗҫленес умӗн колхоз председателӗ Скворцов юлташ колхозниксене ҫитес ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешес задачӑсем ҫинчен ӑнлантарса пачӗ.

П. ПАВЛОВ.

Сталин юлташ докладне итленӗ хыҫҫӑн

ШАХАСАН, ноябрӗн 14-мӗшӗ. (Телефонпа). «Красный партизан» колхоз членӗсем Сталин юлташ докладне пуху туса сӳтсе-яврӗҫ. Вӗсем ҫулпуҫ доклачӗпе пал лашнӑ хыҫҫӑн хӑйсем ҫине ҫӗнӗ обязательствӑсем илчӗҫ. Халӗ колхозниксем ҫуракине хатӗрленес ӗҫе тимлӗн пуҫарчӗҫ. Колхозри ялхуҫалӑх машинисене пӗр ҫӗре тирпейлесе лартрӗҫ. Сӳре тата плуг туртисене тума тытӑнчӗҫ. Лаша витинчи тислӗке уя кӑлараҫҫӗ. 100 лав кӑларнӑ та ӗнтӗ. Ҫавӑн пекех вӑрлӑхлӑх уйарнӑ тырра 39 центнер сортланӑ. Колхоз Хӗрлӗ Ҫар фондне планран ирттерсе 105 центнер ҫӗрулми панӑ.

В. ВЕСЕЛОВ.

ФРОНТОВИКСЕН АЧИСЕНЕ ПУЛӐШМА

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефонпа). Хӗл кунӗсем ҫитрӗҫ. Шкул ачисем сивӗ кунсенче те пӗр кун сиктермесӗр вӗренме сӳреччӗр тесен, вӗсене ӑшӑ тумтирсем туса памалла. Ку тӗлӗшпе уйрӑмах ашшӗсем фронтра вилнипе тӑлӑха юлнӑ ачасене пулӑшмалла.

Ҫак ӗҫе районри колхозсемпе шкулсем вӗренӳ ҫулӗ пуҫлансанах тытӑнчӗҫ. Ку таранччен фронтовиксен ачисене ӑшӑ кӗпе-тумтирсем туса пама 535 килограмм ытла ҫӑм, 136 мӑшӑр чӑлхасемпе алшишсем, 21 кӗрӗк пиншак, 19 ҫӗлӗк, 29 мӑшӑр ӑшӑ кӗпе-йӗм тата 42 тир пуҫтарнӑ. Фронтовиксен ачисене пулӑшас ӗҫ уйрӑмӑнах Мӑн Шетмӗ вӑтам шкулӗнче (директорӗ Григорьев юлташ) лайӑх пырать. Ку шкулта ҫӑматӑсем тума 40 килограмм ҫӑм, чӑлхасемпе алшишсем 28 мӑшӑр тата ытти япаласем те чылай пуҫтарнӑ. Кушарти пуҫламӗш шкулта 48 килограмм ҫӑм, тумтирсем ҫӗлетме 17 тир тата чӑлхасемпе алшишсем пухнӑ.

Районри чылай шкулсенче кӑҫал вӗри апат ҫитерессине организациленӗ. Апат ҫитерме кирлӗ продуктсене хатӗрлес майпа октябрӗн 15-мӗшӗнче районри шкул ачисен воскресникӗ пулса иртрӗ. Унта шкул ачисем пурӗ 4116 ӗҫкунӗ тунӑ. Ҫак ӗҫкунӗсем ҫине тивекен тырра пӗтӗмпех вӗри апат хатӗрленӗ ҫӗре параҫҫӗ.

С. ШАДИН.
(Хамӑр корр.).

Укерчӗк ҫинче: Совет Союзӗн Геройӗ Л. Павличенко Одесса облаҫӗнчи малта пыракан «Вольный бурлак» колхозра
Б. ЛОСИН фотоӳкерчӗкӗ (ТАСС фотохроники).

Парти активӗн районри пухӑвӗ

ЙЕПРЕҪ, ноябрӗн 14-мӗшӗ. (Телефонпа). Ҫак кунсенче парти активӗн районри пухӑвӗ пулса иртрӗ. Пуху икӗ ыйту: 1944 ҫулхи ялхуҫалӑх ҫулӗн итогӗсемпе ҫитес ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешес задачӑсем тата районри парти организацисенче массӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫ мӗнле пыни ҫинчен сӳтсе-яврӗ.

Малтанхи ыйтупа пухура райсовет исполкомӗн председателӗ И. Алексеев юлташ доклад туса пачӗ. Районри нумай колхозсем кӑҫал ялхуҫалӑх ӗҫӗсене кӗске вӑхӑтра тата лайӑх пахалӑхпа туса ирттернӗ, тырпул тухӑҫне ӳстернӗ. Ялхуҫалӑх ӗҫӗсенче малта пыракан «Путиловка» тата «Тымар» колхозсем чылай вӑйлӑ тӗштырӑ туса илнӗ. Анчах тырпул тухӑҫне ӳстерессишӗн начар ӗҫлекен колхозсем те сахал мар. «Оборона», «Красный металлист», «Трудовик» тата «Победа» колхозсем вӑтам шутран гектартан пӗтӗмпе те 3—4 центнер ҫеҫ тырӑ пухса илнӗ.

Район государствӑна тырӑ памалли плана октябрӗн ?? мӗшӗ тӗлне тултарнӑ. Ҫав вӑхӑтрах «8-е марта» тата Буденный ячӗпе тӑракан колхозсем паянхи куна та государствӑна ҫӗрулми парса татман. МТС хӑйӗн ӗҫ планне 140 процент тултарнӑ. Хальхи вӑхӑтра районри колхозсенче вӑрлӑх фончӗсем хывас ӗҫ пырать.

Районри колхозсем выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана тултарас тӗлӗшпе начар ӗҫлеҫҫӗ. Район выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетмелли плана тултарман. Ку тӗлӗшпе уйрӑмах «Красный водник» тата «8-е марта» колхозсем начар ӗҫлеҫҫӗ.

Выльӑх-чӗрлӗхе хӗл каҫарма хатӗрленес, ҫамрӑк выльӑхсене кӗтсе илсе сыхласа хӑварас тӗлӗшпе те районри чылай колхозсем тивӗҫлипе ӗҫлесе пымаҫҫӗ.

Пуху 1945 ҫулхи ҫуракине хатӗрленмелли ӗҫсене палӑртрӗ. Ҫав майпа колхозсемпе колхозницӑсем хушшинче социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса яма йышӑнчӗ.

Иккӗмӗш ыйтупа пухура ВКП(б) райкомӗн секретарӗ Сидоров юлташ доклад туса пачӗ. Доклад хыҫҫӑн пренире 10 ҫын тухса калаҫрӗҫ. Тухса калаҫакансем районра марксизм-ленинизм теорине вӗренес ӗҫ ҫителӗксӗр пулса пынине палӑртрӗҫ. Чылай коммунистсем большевиксен партин историне тата Сталин юлташӑн «Совет Союзӗн Отечественнӑй аслӑ вӑрҫи ҫинчен» ятлӑ кӗнекине харпӑрхӑй тӗллӗн вӗренмеҫҫӗ, хӑйсен политикӑллӑ пӗлӗвне ӳстерсе пымаҫҫӗ. Агитациллӗ-массӑллӑ ӗҫе чылай ҫӗрте явӑхтарнӑ. «Красный фронтовик» колхоз ҫумӗнчи пуҫламӗш организаци (секретарӗ Никишов юлташ) вунӑ уйӑх хушшинче 7 пуху ҫеҫ туса ирттернӗ.

Вулав ҫурчӗсем начар ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсенче тӗрлӗ кружоксем организацилемен, стена хаҫачӗсем йӗркеллӗ кӑларса тӑмаҫҫӗ.

Хӑшпӗр коммунистсем колхозниксемпе колхозницӑсем хушшинче политикӑллӑ докладсемпе лекцисем туса памаҫҫӗ. Хаҫат вуламан, кулленхи пурнӑҫран юлса пыракан коммунистсем те пур. Кун пек коммунистсен шутне Шатукин тата Захаров юлташсене кӗртмелле.

Пуху массӑллӑ-политикӑллӑ ӗҫе лайӑхлатас тӗлӗшпе ҫитес кунсенчех тумалли ӗҫсене палӑртрӗ.

П. КУРАКОВ.

ФРОНТОВИКСЕН ҪЕМЬИСЕНЕ ПУЛӐШМА ВОСКРЕСНИКСЕМ ТУНА

Ноябрӗн 12-мӗшӗнче Ленинградра тата Ленинград облаҫӗнчи районсенче фронтовиксен тата Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсен ҫемьисене пулӑшма йышлӑ ҫынлӑ воскресниксем туса ирттернӗ. Нумай предприятисемпе учрежденисен коллективӗсем чылай пысӑк ӗҫ тунӑ.

«Скороход» фабрикинче ӗҫ пӗтнӗ хыҫҫӑн 1.000 мӑшӑр атӑ-пушмак туса кӑларнӑ. «Большевик» заводӑн рабочийӗсемпе служащийӗсем 105 пӳлӗм юсанӑ. Петроград районӗнче 325 кубометр вутӑ пушатнӑ. Куйбышев районӗнче 354 пӳлӗм юсанӑ. Дзержинский районӗнче пӗр кун хушшинче 300 кубометр топливо пушатнӑ, фронтовиксемпе Отечественнӑй вӑрҫӑ инвалидӗсен ҫемьисене нумайӗшне вутӑ килнех илсе пырса панӑ, халӗ 300 пӳлӗме юсаҫҫӗ. (ТАСС).

ВЫРӐССЕН АСЛӐ БАСНОПИСЕЦӖ ВИЛНЕРЕНПЕ 100 ҪУЛ ҪИТНЕ ТӖЛЕ

Вырӑссен аслӑ баснописецӗ А. И. Крылов вилни 100 ҫул ҫитнине палӑртас мутпа Крылов кӗнекисене тата Крылов ҫинчен ҫырнӑ кӗнекесене нумай пичетлесе кӑлараҫҫӗ. Литература издательстви Крыловӑн мӗнпур баснисене пӗр том туса пичетлесе кӑларнӑ, юбилей тӗлне вӑл тата Крыловӑн мӗнпур сочиненийӗсен пӗрремӗш томне пичетлесе кӑларать. «Молодая гвардия» издательстви, Детгиз тата ыттисем те Крыловӑн произведенийӗсене, «Белинский о Крылове» ятлӑ кӗнеке тата ытти кӗнекесем те пичетлесе кӑлараҫҫӗ.

Аслӑ баснописецӑн произведенийӗсене Азербайджанра, Таджикистанра, Туркменире тата РСФСР-ти автономиллӗ республикӑсенче тӑван чӗлхесемпе йышлӑн пичетлесе кӑлараҫҫӗ. Темиҫе хулара Крылов выставкисем уҫма хатӗрленеҫҫӗ. РСФСР Наркомпросӗ клубсем, библиотекӑсем, читальнӑсем валли плакат пичетлесе кӑларать. (ТАСС).

ЧАВАШ АССР-ӗнчи КОЛХОЗСЕНЧЕ 1944 ҪУЛХИ НОЯБРӖН 10-мӗшӗ ТӖЛНЕ ВАРЛАХ МӖН ЧУХЛЕ ХЫВНИНЕ КАТАРТАКАН

СВОДКА
(процентпа)

Районсем	Тӗштырӑсемпе пӑрҫа йышши культурӑсен вӑрлӑхӗсене хывнӑ (викӑспа тата страхфондӑпа)	Вӑрлӑхлӑх ҫӗрулми хывнӑ	Клевер вӑрлӑхӗ хывнӑ
Вӑрнар	97.3	84.1	35.2
Шупашкар	95.0	96.5	24.6
Ҫӗрпӳ	90.6	91.9	86.5
Етӗрне	87.6	78.4	13.4
Сӗнтӗрвӑрри	84.1	70.8	7.6
Канаш	81.3	56.6	4.6
Ишлей	79.5	83.1	20.5
Красноармейски	78.6	100.0	72.9
Йӗпреҫ	75.2	34.7	7.8
Калинино	73.6	69.9	30.0
Муркаш	69.7	83.8	37.8
Сӗнтӗр	67.9	81.5	27.1
Елчӗк	66.6	44.4	13
Чкаловски	65.4	31.9	22.2
Чурачӑк	65.2	61.9	5.0
Куславкка	62.9	69.0	13.8
Тӑвай	55.6	56.2	37.1
Шӑхасан	55.1	50.8	8.8
Октябрьски	51.9	76.0	10.0
Советски	51.1	62.3	16.2
Вӑрмар	48.9	69.6	33.2
Элӗк	48.2	58.5	11.5
Шӑмӑршӑ	46.8	12.9	67.1
Хӗрлӗ Чутай	45.4	29.5	24.2
Улатӑр	43.8	24.2	17.2
Ҫӗмӗрле	42.8	17.6	—
Первомайски	46.0	24.5	18.5
Пӑрачкав	41.2	30.3	10.3
Комсомольски	40.7	53.2	7.1
Кувакино	38.8	21.7	—
Шупашкар хули	103.8	104.0	—
ЧАССР тӑрӑх	62.9	63.4	21.2

Хӗрлӗ Ҫар фондне—ҫӗрулми

Октябрьти революци пулнӑранпа 27 ҫул тултарас умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, республикӑри колхозсем Хӗрлӗ Ҫар фондне планран ирттерсе ҫӗрулми пама обязательствӑсем илчӗҫ. Ҫав обязательствӑсене ноябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне пурнӑҫа кӗртме пулчӗҫ.

Ноябрӗн 14-мӗшӗ тӗлне Ҫӗрпӳ, Красноармейски, Сӗнтӗр, Куславкка районӗсенчи колхозсем хӑйсен обязательствисене чыслӑн пурнӑҫа кӗртрӗҫ.

Анчах Канаш, Сӗнтӗрвӑрри, Калинино тата ытти хӑшпӗр районсенчи колхозсем хӑйсен обязательствисене пурнӑҫа кӗртес тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ-ха.

* * *

ЭЛӖК, ноябрӗн 14-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри колхозсем Хӗрлӗ Ҫар фондне планран ирттерсе 400 тонна ҫӗрулми пама пулнӑччӗ. Паянхи кун тӗлне пирӗн районри 48 колхоз хӑйсем илнӗ обязательствӑна чыслӑн пурнӑҫларӗҫ.

Халӗ районри пур колхозсенче те Сталин юлташӑн докладне сӳтсе-явас тӗлӗшпе пухусем пулса иртеҫҫӗ. Ҫулпуҫӑн доклачӗпе хавасланнӑ колхозниксем государство умӗнчи пур парӑмсене те вӑхӑтра парса татма пулаҫҫӗ.

Анчах ку тӗлӗшпе района каялла туртса пыракан колхозсем те пур-ха. Куракассинчи Хурӑн ҫуч» колхоз (председателӗ Макаров юлташ), Тугачри «XVI партсъезд» (председателӗ Романов) тата Уйкасри Буденный ячӗпе тӑракан (председателӗ Андреев юлташ) колхозсем хӑйсем илнӗ обязательствӑсене халӗ те пурнӑҫламан.

И. НИКОЛАЕВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

* * *

ИШЛЕП. Ишек ялсоветне кӗрекен «Гвардия», «Знамя труда» тата Сталин ячӗпе тӑракан колхозсем планран ирттерсе Хӗрлӗ Ҫар фондне ҫӗрулмипе пахча-ҫимӗҫ пама илнӗ обязательствӑна чыслӑн пурнӑҫларӗҫ. Вӗсем Хӗрлӗ Ҫар фондне 1.200 пӑт ҫӗрулми хыврӗҫ.

З. М.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

„Артиллери кунне" Свердловск, Горький, Молотов тата Тула хулисенче уявласа ирттермелли йӗрке ҫинчен

Свердловск, Горький, Молотов тата Тула хулисенчи ӗҫҫыннисем йышлӑн ыйтнӑ пирки тата артиллерие аталантарса пырас ӗҫре ҫав хуласем пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине шута илсе, СССР Верховный Совет Президиумӗн 1944 ҫулхи октябрӗн 21-мӗшӗнчи указӗ ҫумне хушса, ҫапла йышӑнас: Свердловск, Горький, Молотов тата Тула хулисенче ноябрӗн 19-мӗшӗнче «Артиллери кунӗнче» икҫӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе салют памалла.

СССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ **М. КАЛИНИН.**

СССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗ **А. ГОРКИН.**

Мускав, Кремль. 1944 ҫулхи ноябрӗн 13-мӗшӗ.

РСФСР Совнаркомӗпе ВЦСПС-ра

РСФСР Совнаркомӗпе Профсоюзсен Пӗтӗм Союзри Центральный Комитечӗ РСФСР Апат-ҫимӗҫ Халӑх Комиссариачӗн районсемпе хуласенчи апат-ҫимӗҫ комбиначӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1944 ҫулхи октябрь уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухнӑ, социализмлӑ ӑмӑртура Ярославль облаҫӗпе Мускав облаҫӗ тата Чӑваш АССР-ӗ мала тухнӑ тесе палӑртнӑ.

РСФСР Совнаркомӗпе ВЦСПС Чӑваш АССР-не виҫҫӗмӗш преми пама йышӑннӑ.

ОДЕССА ЮСАНАТЬ

Одесса хулине ирӗке кӑларнӑранпа иртнӗ 200 кун хушшинче хулана юсаса ура ҫине тӑратас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫ тунӑ. Пуҫне тӑратас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫ тунӑ. Пурӑнмалли хваттерсене 100 пин тӑваткӑл метр чухлӗ юсаса, унта ҫынсене пурӑнма вырнаҫтарнӑ. 72 шкул, сывататакан учрежденисем нумайӗшӗ, сӗт кухнисем, ача консультацийӗсем ӗҫлеме пуҫланӑ.

15 аслӑ шкул тата Наукӑпа тӗпчев институчӗсем 20 институт ҫӗнӗрен ӗҫлеме пуҫланӑ. Экспериментлӑ офтальмологи институчӗ ӗҫлет, ӑна паллӑ ученӑй Филатов ертсе пырать. Промышленносри 100 предприятие ытла юсаса хута янӑ. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровӗнчен

НОЯБРӖН 13-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Ноябрӗн 13-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем Венгрире ЯСАПАТИ хулипе чугун ҫул станцине туртса илнӗ. ҫавӑн пекех тата халӑх пурӑнакан ытти темиҫе пункта йышӑннӑ, вӑл шутра — ЯСКИШЕР, ЯС-МАХАЛЬТИЛЕК, ТАПИОСЕНТМАРТОН, ТАПИОБИЧКЕ, ПАНД, КАВА, ЖИГЕРИ, БЕНИЕ ятлӑ ялсем тата ПУСТА-КЮРТ, ЯСКИШЕР чугун ҫул станцийӗсем.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ.

Ноябрӗн 12-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем нимӗҫсен 24 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

☆ ☆ ☆

Венгрире пирӗн ҫарсем тӑшманпа ҫапӑҫса малалла куҫса пынӑ. Сольнок хулинчен ҫурҫӗртерехре совет пехотинецӗсемпе кавалеристӗсем тӑшман оборонин Яскишер ятлӑ тӗреклетнӗ паха пункчӗпе чугун ҫул станцине туртса илнӗ. Унтан пирӗн чаҫсем тӑшман кӗтмен ҫӗртен маневр тунӑ та Ясапати хулине вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Урамсенчи ҫапӑҫусенче нимӗҫсемпе венгерсен хулари гарнизонне аркатса тӑкнӑ, тӑшман ним тӗлли-паллисӗр каялла чакнӑ. Пирӗннисем трофейсем тытса илнӗ, вӑл шутра — 17 тупӑ, 16 миномет, 40 пулемет тата боеприпас склачӗ.

Цеглед хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшман хытӑ хирӗҫ тӑнине ҫӗнтере-ҫӗнтере, 10 километр таран малалла кайнӑ. Кун каҫиччен гитлеровецсем темиҫе хутчен те контратака тунӑ, анчах та вӗсене каялла хӑваласа янӑ. Нимӗҫсемпе венгерсен 1.200 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Тыткӑна лекнисем каласа кӑтартнӑ тӑрӑх, венгерсен 20-мӗш пехотнӑй дивизине совет ҫарӗсен наступленине ку участокра чарса лартма хушнӑ пулнӑ, анчах та ҫав дивизие совет ҫарӗсем ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Дивизирен юлнӑ юлашкисене пӗр батальона пухнӑ.

Кун каҫиччен пирӗн ҫарсем тӗрлӗ участоксенче тӑшманӑн пӗр пин салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

* * *

Хӗвелтухӑҫ Пруссире пирӗн ҫарсем тӑшмана хирӗҫ персе тӑнӑ. Пӗр участокра тӑшман пулемечӗсем совет позицийӗсене пӗр чарӑнмасӑр персе тӑнӑ. Комаров старшин сержантӑн тупӑ расчечӗ пеме пуҫланӑ та гитлеровецсем персе тӑнӑ сарая вут тивертсе янӑ. Вут сарайпа юнашар ларакан ытти хуралтӑсене те ярса илнӗ. Хуралтӑсенчен чупса тухакан нимӗҫсене ванакан снарядсемпе пенӗ. Тӑшманӑн персе тӑракан вырӑнӗсене, ҫапла, пӗтерсе тӑкнӑ.

Пӗр чаҫри снайперсем гварди ефрейторӗ Полишук, гварди сержанчӗ Попова тата красноармеец Мороз 4 кун хушшинче 13 гитлеровеца вӗлернӗ.

* * *

Ужгород хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре нимӗҫсен отрячӗ пирӗн ҫарсем тӑракан вырӑна сӑрхӑнса кӗме хӑтланнӑ. Ҫӑра тӗтре тӑнӑ пулин те, совет боецӗсем гитлеровецсене вӑхӑтра асӑрханӑ та вӗсен каялла чакмалли ҫулӗсене татнӑ. Нимӗҫсен отрядне вара пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра Ракитин старшина ертсе пыракан разведчиксен ушкӑнӗ ҫӗрле тӑшман позицийӗсем патне пырса тухнӑ. Разведчиксем тӑшман блиндажне вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та 10 нимӗҫе вӗлернӗ. Унтан икӗ гитлеровеца тытса илнӗ те хӑйсен чаҫне тӗрӗс-тӗкӗлех таврӑннӑ.

* * *

Украинӑри 1-мӗш фронтӑн пӗр участокӗнче пирӗн подразделенисем ҫапӑҫса разведка тунӑ. Тӑшман хытӑ хирӗҫ тӑнӑ, унтан хӑй контратака тунӑ. Хаяр тытӑҫу пуҫланса кайнӑ. Совет боецӗсем тӑшмана каялла хӑваласа янӑ. 150 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейсем тытса илнӗ.

* * *

Балтика тинӗсӗнче пирӗн карапсем нимӗҫсен икӗ транспортне шыва путарнӑ.

Венгрире, фронтӑн пӗр участокӗнче, венгерсен резерври 5-мӗш дивизийӗн 20-мӗш полкӗнчен 200 салтак тыткӑна парӑннӑ. Вӗсене Олайош лейтенант ертсе пынӑ. Ҫав Олайош лейтенант ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Юлашки ҫапӑҫусенче пирӗн полка пуҫӗпех ҫӗмӗрсе тӑкрӗҫ. 2-мӗш батальонри подразделенисем уйрӑмах йывӑр ҫухатусем тӳсрӗҫ. Вырӑссем пире пур енчен те хупӑрласа илчӗҫ. Батальон командирӗ Молнар Габор майор таҫта ҫухалчӗ. Салтаксем хӑраса ӳкрӗҫ. Вӗсем алӑри хӗҫпӑшала пӑрахрӗҫ те ӑҫта килчӗ унталла тарма пуҫларӗҫ. Эпӗ лару-тӑру шанчӑксӑррине ӑнланса илтӗм те пур подразделенири салтаксене те вырӑссене хирӗҫ тӑма пӑрахма хушрӑм. 200 ҫын пухӑнчӗҫ. Вара эпир алӑсене ҫӳлелле ҫӗклерӗмӗр те вырӑссене хирӗҫ тухрӑмӑр».

Фронтӑн тепӗр участокӗнче венгерсен 23-мӗш дивизине панӑ 201-мӗш уйрӑм батальон пӗтӗмӗшпех Хӗрлӗ Ҫар енне каҫнӑ. Мӗн пурӗ 520 салтакпа офицер тыткӑна парӑннӑ. Ҫав батальон командирӗ полковник Густав Сенткирайи ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Эпӗ Венгрин генеральнӑй штабӗн оперативнӑй отделӗн начальникӗн Лайош Вельди генерал-полковникӑн адъютанчӗ пулса ӗҫлерӗм. Нумаях пулмасть нимӗҫсем Вельди генерала хупса лартрӗҫ. Мана фронта ячӗҫ, октябрӗн 27-мӗшӗнче вара батальон командирӗ пулма уйӑрса лартрӗҫ. Вырӑс ҫарӗсене хирӗҫ тӑрса ҫапӑҫни усӑсӑррине эпӗ унччченех ӑнланса илнӗ. Нимӗҫсемшӗн хам салтаксен пурнӑҫне пӗтерес темерӗм, ҫавӑнпа эпӗ батальона тыткӑна парӑнма сӗнтӗм. Ман шухӑша пур офицерсем те ырларӗҫ. Салтаксем ҫинчен каламалли те ҫук ӗнтӗ. Вӗсем пурте хӗпӗртесе кайрӗҫ, алӑри хӗҫпӑшала хавасланса ҫӗре пӑрахрӗҫ».

Орденлă икĕ колхоз ăмăртăвĕн чаплă итогĕсем

* * *

Лайăх ĕçленĕ!

Мускав облаçĕнчи Дмитров районĕнчи «Победа» колхоз председателĕ И. С. ЕГОРОВ Чăваш АССР-ĕнчи Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз колхозникĕсен пухăвĕнче тухса калани

Кăçалхи çуркунне, пирĕн ăмăрту пуçланнă вăхăтра, эпĕ çак ăмăрту çав тери вăйлă пулса кайĕ тесе шутламанччĕ. Ăмăрту результачĕсем пысăк пулассӑн туйăнмастчĕ. Мĕншĕн тесен пирĕн çак икĕ колхоз пĕр-пĕринчен инçере—темиçе çĕр километрта лараççĕ. Анчах та ĕç урăхла пулса тăчĕ. Ăмăрту вăйне эпир çăвĕпех туйса тăтăмăр. Мускавра тухакан хаçатсенче сирĕн колхоз çинчен çырнă статьясене курсан, эпир вĕсене бригадăсенче вуласа параттăмăр, унтан, пирĕнпе ăмăртакан колхозра мĕн тунине пурте пĕлсе тăччăр тесе, çав статьясене кантурта çакса хураттăмăр.

Сирĕн яла эпир пĕрремĕш хут килтĕмĕр. Калас пулать, сирĕн колхоз пире питĕ кăмăла кайрĕ. Сирĕн артель—пур колхозсем те мĕнле пулмаллине кăтартакан сăнлăх пулса тăрать.

Сталин ячĕпе тăракан колхоз 200 киле пĕрлештерсе тăрать. 617 гектар çĕр çинче эсир кашни гектартан вăтамран 22,32-шер центнер тĕштырă пухса илнĕ. Çавăн чухлĕ çĕр çине тырă вăхăтра акма, ăна вăхăтра пухса кĕртме, мĕнпур ĕçсене срокчен туса пĕтерме вăй нумай хумалла пулнă.

Çавăн чухлĕ тырă пухса илме çăмăл пулман. Анчах эсир вăя шеллемесĕр ĕçленĕ, çавăнпа сирĕн результатсем лайăх пулнă.

Эпир нумай колхозниксемпе калаçрăмăр. Вĕсем пурте агротехникăна пĕлни палăрчĕ. Кĕрхи çĕртмене мĕншĕн тунине, тырра мĕншĕн вăхăтра акма кирлине, ретлĕ акни сапаласа акнинчен мĕн енĕпе лайăхраххине бригадирсем е звеньевойсем çеç мар, ахаль колхозниксем те лайăх пĕлеççĕ. Апла пулсан, вĕсем малта пыракан агротехникăна пурнăçа кĕртме тăрăшасси пирки нимĕн иккĕленмелли те çук.

Эпир сирĕн хуçалăха икĕ кун хушши пăхса çӳрерĕмĕр. Сирĕн строительство питĕ вăйлă ӳссе кайни пире пуринчен те ытларах тĕлĕнтерчĕ. Сирĕн колхозăн çурт-хуралтăсем питĕ пысăк, çутă, аслă, таса. Эпир пурăнакан вырăнта ун пеккисене чи лайăх совхозсенче çеç курма пулать. Сирĕн зернохранилищĕсем Госсортфондăн темиçе район валли тунă базисен склачĕсенчен те кайра тămаççĕ.

Коллективизаци пуçланнăранпа эсир хăвăр вăйăрпа тата хăвăр укçăрпа электростанци, икĕ арман, радиоузел, столовăй, пысăк клуб тата ытти питĕ лайăх çуртсем нумай туса хунă; столовăй ĕçлекенсем валли апат çулталăкĕпех хатĕрлесе тăрать.

Эпир выльăх-чĕрлĕхсен картишĕсенче пуринче те пултăмăр. Сирĕн выльăх-чĕрлĕх хулине пăхса савăнатăн. Кашни çурт тавра хӳме тытса çавăрнă. Шалта таса та ăшă. Выльăх апачĕ çителĕклех хатĕрлесе хунă.

Аслă Сталин пире, колхозниксене, çĕршывпа фронта апат-çимĕç, промышленноçа чĕртавар ытларах туса пама чĕннĕ. Çак ĕçре те эсир чăн-чăн патриотсем пулса ĕçленĕ. Кăçал çеç эсир государствăна 22.000 пăт тырă тата çĕрулми, пахча-çимĕçсем, сĕт, какай, çăм нумай панă.

Пире эсир çуркунне мĕнле вăрлăх акасси интереслентерчĕ. Эпир çав вăрлăхсене пăхса тухрăмăр. Вĕсем лайăх амбарсенче выртаççĕ. Вăрлăхсем питĕ лайăх, вĕсене сортировкăпа тасатса хунă.

Эсир лайăх ĕçленĕ, тырă нумай туса илнĕ, государствăна та нумай панă, хăвăр та ĕçкунĕсем тăрăх нумай тырă илетĕр. Пире тупăшсене валеçмелли плана кăтартрĕç. Сирĕн кашни ĕçкунĕ пуçне пĕр тĕштырă çеç те 4-шар килограмм лекет.

Анчах эпир çитменлĕхсем те тупрăмăр. Сирĕн пусуçаврăнăшĕ лайăхах мар. Сирĕн çичĕ пусуллă пĕр пусуçаврăнăшĕ вырăнне икĕ тĕрлĕ пусуçаврăнăшĕ тумалла: ферма çумĕнчи пусуçаврăнăшĕ тата тăхăр пусуллă пусуçаврăнăшĕ, çак юлашки пусуçаврăнăшĕнче клевер акакан икĕ пусу пулмалла. Çапла туни çĕр тухăçлăхне ӳстерме пулĕччĕ, тырпул тата ытларах туса илме май панă пулĕччĕ.

Тата çакă начар: сирĕн колхозра çырла тĕмĕсем те, садсем те çук. Эсир çĕрулми те сахал лартатăр.

Манран çапла ыйтаççĕ: икĕ колхозăн çак ăмăртăвĕнче хăшĕ çĕнтерчĕ-ши?—теççĕ. Çак ыйту çине ответ пама йывăр. Пирĕн гектартан тырă кăшт ытларах тухнă пулин те, ман шутпа, çак ăмăртура икĕ колхозĕ те çĕнтерчĕ. Анчах та пирĕн тĕштырă 90 гектар, сирĕн 617 гектар акнине шута илсен, çавăн пек пысăк тухăçлă тырă туса илмешкĕн эсир питĕ нумай ĕçлени паллă пулса тăрать.

Эпĕ хам сăмаха пĕтеретĕп, юлташсем. Спасибо сире пире лайăх, кăмăллă кĕтсе илнĕшĕн. «Победа» артелĕн колхозникĕсем хушнипе каласа паратăп: вĕсем пире сирĕнпе тунă ăмăрту договорне 1945 çулшăн тăсма хушрĕç. Эсир килĕшетĕр пулсан, татах та вăйлăрах тырпул туса илессишĕн малашне те кĕрешĕпĕр. (Алă çупаççĕ).

* * *

1945 çулхи социализмлă ăмăрту ДОГОВОРĔ

1944 çулхи ăмăртăвăн итогĕсене пăхса тухма Мускава «Социалистическое земледелие» хаçатăн редакцине пухăнса, эпир Чăваш АССР-ĕнчи Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз тата Мускав облаçĕнчи Дмитров районĕнчи «Победа» колхоз представителĕсем, хамăр колхозниксен пухăвĕсем хушнипе, 1945 çулхи социализмлă ăмăртăвăн çак договорне алă пусрăмăр.

Эпир çакăн пек обязательствăсем илетпĕр:

1. «ПОБЕДА» КОЛХОЗ: кĕртыррисем пе çуртыррисем акнă пĕтĕм çĕр çинче кашни гектартан вăтамран 26 центнертан кая мар тĕштырă пухса илмелле, кашни гектартан 240 центнер çĕрулми, 500 центнер купăста пухса илмелле; СТАЛИН ЯЧĔПЕ ТĂРАКАН КОЛХОЗ: кашни гектартан тĕштырăсем—25 центнер, çĕрулми—170 центнер, купăста—500 центнер пухса илмелле.
2. Пур тĕрлĕ выльăхсен йышне те ӳстермелли плансене ирттерсе тултармалла, выльăх-чĕрлĕхсен тухăçлăхне хăпартмалла, çамрăк выльăхсене пурне те сыхласа хăвармалла.
3. Ялхуçалăхĕнчи мĕнпур ĕçсене тĕрĕс срокчсенче тата агротехника енчен лайăх туса ирттермелле.
4. Государство умĕнчи мĕнпур обязательствăсене срокчен парса татмалла тата чи лайăх продуктсем памалла.
5. Ăмăрту арбитрĕ пулма, 1944 çулхи пекех, СССР Наркомземĕн органĕ пулса тăракан «Социалистическое земледелие» хаçатăн редакцине суйлас.

Мускав, 1944 çулхи ноябрĕн 5-мĕшĕ.

«Победа» артель представителĕсем:

И. ЕГОРОВ, Е. БЕЛЯНИН, Е. ЕГОРОВА, И. МАКЕЕВА, М. ГРИЦАЮК.

Сталин ячĕпе тăракан артель представителĕсем: А. ВАСЯНИН, А. ФРОЛОВА, В. МИРОНОВА, Д. ВАСЯНИН, С. САКАНИН.

Мускав облаçĕнчи Дмитров районĕнчи „Победа“ колхоз социализмлă ăмăртура илнĕ хăйĕн обязательствисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕсленин АКЧĔ

1944 çулхи ноябрĕн 4-мĕшĕ. Чăваш АССР-ĕнчи Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозăн Тĕрĕслев комиссийĕ — колхоз председателĕ А. Д. Васянин, бригадирсем В. М. Миронова тата А. Д. Фролова, колхозник-стахановецсем Д. Е. Васянин тата С. М. Саканин, Вăрнар МТС-ĕн директорĕ Ф. С. Никонов хутшăнса ĕçленипе, ăмăрту договорне Мускав облаçĕнчи Дмитров районĕнчи «Победа» колхоз мĕнле пурнăçланине тĕрĕслерĕ.

Бухгалтерире усракан документсенчен çакă курăнать: «Победа» колхоз 90,78 гектар çĕр çинче кашни гектартан вăтамран планпа кăтартнă 18 центнер вырăнне 25,5 центнер тĕштырă пухса илнĕ. Ыраш гектартан вăтамран 27,26 центнер, кĕрхи тулă 27,84 центнер, урпа—38,62 центнер, сĕлĕ—25,95 центнер тухнă. Çĕрулмине 47 гектар лартнă, кашни гектартан вăтамран 229,3 центнер тухнă; купăстана 4 гектар çĕр çинче 420-шер центнер пухса илнĕ; кишĕр пĕр гектар çĕр çинче 250 центнер кăларнă.

Бригадăсем пурте пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçленĕ. Мария Грицаюк ертсе пыракан бригадăн чи лайăх результатсем пулнă. Çав бригадăра 5,11 гектар çĕр çинче кĕрхи тулă кашни гектартан вăтамран 33,19 центнер, ыраш 11,32 гектар çĕр çинче кашни гектартан 27,66 центнер, сĕлĕ 8 гектар çĕр çинче 26,5-шер центнер пухса илнĕ, çĕрулми пĕр гектар çĕр çинче 513 центнер кăларнă.

Колхоз тырă вырма пуçласанах хăйĕн государство умĕнчи обязательствисене пурнăçлама тытăннă, вăл вĕсене срокчен парса татнă. Мĕн пурĕ çакăн чухлĕ панă: тĕштырăсем — 518 центнер, çав шутран 100 центнерне планран ирттерсе панă; çĕрулми — 3.863 центнер, çав шутран 2.000 центнерне планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне хывнă. Ытти продуктсем тĕлĕшпе — сĕт, какай тата çăм тĕлĕшпе те — колхоз хăйĕн государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татнă.

Обществăллă фондсем шанчăклă амбарсенче выртаççĕ. Тĕрлĕ фондсене мĕн пурĕ 286 центнер тĕштырă хывнă тата 1.538 центнер çĕрулмине сыхласа усрама хывнă.

Колхозниксем кашни ĕçкунĕ пуçне 2 килограмм тĕштырă, 9 килограмм çĕрулми, 1,5 килограмм купăста, 3 килограмм утă, 0,5 килограмм пахча-çимĕç, 1,5 килограмм улăм тата 2 тенкĕ укçан илеççĕ.

Кĕрхи çĕртме туса пĕтернĕ тата ăна лайăх тунă. Калчасем питĕ лайăх.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне çакăн чухлĕ тултарнă: майракаллă шултăра выльăхсем 70 пуç пур (планра та çавăн чухлех кăтартнă), сыснасем планра кăтартнă 24 пуç вырăнне 36 пуç, сурăхсем планра кăтартнă 70 пуç вырăнне 65 пуç, кайăк-кĕшĕксем планра кăтартнă 300 пуç вырăнне 400 пуç, лашасем планра кăтартнă 32 пуç вырăнне 29 пуç пур.

Тырпул тухăçлăхĕн планĕсене ирттерсе пурнăçланăшăн малта пыракан звеносемпе бригадăсене мĕн чухлĕ продукт хушса памаллине шутласа хунă.

Комисси çапла шутлать: «Победа» колхоз 1944-мĕш ялхуçалăх çулне чылай пысăк çитĕнӳсемпе вĕçленĕ.

Тĕрĕслев комиссийĕ:
А. ВАСЯНИН, В. МИРОНОВА, А. ФРОЛОВА, Д. ВАСЯНИН, С. САКАНИН, Ф. НИКОНОВ.

Чăваш АССР-ĕнчи Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз социализмлă ăмăртура илнĕ хăйĕн обязательствисене мĕнле пурнăçланине тĕрĕсленин АКЧĔ

1944 çулхи октябрĕн 24-мĕшĕ. Мускав облаçĕнчи Дмитров районĕнчи «Победа» колхозăн Тĕрĕслев комиссийĕ — колхоз председателĕ И. С. Егоров, бригадир Е. В. Белянин тата звеньевой Е. И. Егорова,—ăмăрту договорне Чăваш АССР-ĕнчи Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз мĕнле пурнăçланине тĕрĕслерĕ.

Кăçал Сталин ячĕпе тăракан колхоз пусуçаврăнăшĕн хирĕсенче 204 гектар ыраш акнă, кашни гректартан вăтамран 21,57 центнер пухса илнĕ. Кĕрхи тулă 35 гектар акнă, кашни гектартан вăтамран 15,7 центнер вырса илнĕ. Çурхи тулă 124 гектар акса, гектартан вăтамран 19,8 центнер пухса илнĕ. Урпа—20 гектар çĕр çинче кашни гектартан 29,11 центнер, пăрçа—20 гектар çĕр çинче кашни гектартан 15,75 центнер, сĕлĕ—176 гектар çĕр çинче кашни гектартан 26,42 центнер, вăрришĕн акнă вика—10 гектар çĕр çинче кашни гектартан 14,18 центнер, вир—28 гектар çĕр çинче кашни гектартан 14,4 центнер пухса илнĕ. 617 гектар çĕр çинче тĕштырăсем вăтамран кашни гектартан 28,32 центнер тухнă.

Уйрăм участоксенче тата ытларах тырпул пухса илнĕ; сăмахран, А. Фролова бригадинче 17 гектар çĕр çинче ыраш кашни гектартан вăтамран 202 пăт тухнă, В. Миронова бригадинче урпа 16 гектар çĕр çинче кашни гектартан 185-шер пăт тухнă.

Çĕрулми 48 гектар лартнă пулнă. Пĕтĕм колхозĕпе кашни гектартан 150 центнер çĕрулми тухнă. Хăшпĕр бригадăсенче çĕрулми унтан та ытларах тухнă; сăмахран, Н. Леонтьева бригадинче 12 гектар çĕр çинче кашни гектартан 172-шер центнер çĕрулми кăларнă, В. Миронова бригадинче 12 гектар çĕр çинче кашни гектартан 186-шер центнер кăларнă.

Сталин ячĕпе тăракан колхоз государствăна обязательствăсем тăрăх, натуроплата йĕркипе тата Хĕрлĕ Çар фондне мĕн пурĕ 3.579 центнер тĕштырă панă, çав шутран 504 центнерне 1945 çулшăн панă, 47 центнерне 1945 çулхи натуроплата шучĕпе панă. Планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 260 центнер тĕштырă панă.

Выльăх-чĕрлĕхсен йышне ӳстермелли государство планне пур выльăх-чĕрлĕхсем тĕлĕшпе те ирттерсе пурнăçланă.

1944 çулта государствăна 1945 çулшăн 33 центнер какай панă. Сĕт памалли плана тултарнă.

Выльăхсене хĕл каçарма пур çуртсене те хатĕрлесе çитернĕ.

Вăрлăх фончĕсене пурне те туса çитернĕ, вăрлăхсене «ВИМ—2» йышши сложнăй сортировкăпа сортласа хунă. Ĕçкунĕсем тăрăх аванс шучĕпе продуктсем вăхăтра панă.

Комисси çапла шутлать: Сталин ячĕпе тăракан колхоз ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçленĕ.

Тĕрĕслев комиссийĕ:
И. ЕГОРОВ, Е. БЕЛЯНИН, Е. ЕГОРОВА.

* * *

Пурне те лайăх хуçа пек пăхатăр

Чăваш АССР-ĕнчи Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ А. Д. ВАСЯНИН Мускав облаçĕнчи Дмитров районĕнчи «Победа» артелĕнти колхозниксен пухăвĕнче тухса калани

Юлташсем, пирĕн Чăваш республикинчи колхозпа сирĕн Мускав патĕнчи колхоз хушшинче пĕр пекки мĕн пур-ха? Кунта чи малтан çакă пĕр пек: пирĕн икĕ колхоза та правительство вăйлă тырпул туса илнĕшĕн наградăланă. Унтан вăрçă вăхăтĕнче эпир те, эсир те хамăр хуçалăхсене тĕреклетнĕ, государствăна мирлĕ вăхăтринчен ытларах апат-çимĕç туса паратпăр.

Малтан пирĕн хăшпĕр колхозниксем çапла калатчĕç: «Пирĕн «Победа» колхозпа ăмăртма кирлĕ мар, мĕншĕн тесен унта — Мускав патĕнче — условисем кунтинчен лайăхрах, вĕсен колхозĕнче пур çурт-хуралтăсем те лайăх, унта урамсене те асфальт сарнă», тетчĕç. Эпир çав колхозниксене — «Победа» колхоз, чăнах та ĕнтĕ, малта пыракан колхоз, анчах та унăн ялхуçалăх условийĕсем пирĕнни евĕрлех, тесе ăлантарнă хыççăн колхозниксем иккĕленме пăрахрĕç.

Эпир сирĕн колхозра икĕ кун пурăнтăмăр. Эпир пĕтĕм хуçалăха тĕрĕслесе тухрăмăр. Кĕрхи калчасене, кĕрхи çĕртме мĕнле тунине пăхса тухрăмăр, выльăх картишĕсенче, сарайсенче, зерносушилкăра пултăмăр, колхозниксемпе калаçрăмăр, вĕсен килĕсене кĕре-кĕре пăхрăмăр, кашнин хăйĕн мĕнле хуçалăх пуррипе интереслентĕмĕр, çавăн пекех тата эсир колхоз интересĕсене кашни колхозникĕн хăйĕн интересĕсемпе мĕнле çыхăнтарса, килĕштерсе пынине пĕлесшĕн пултăмăр.

Пирĕн пĕтĕмĕшле вывод çакăн пек. «Победа» колхоз — кăтартуллă хуçалăх. Эсир çуллен пысăк тухăçлă тĕштырă пухса илни вăл, чăнах та, ăнсăртран пулнă япала мар. Эпир темиçе çулталăкри отчетсене тĕрĕслесе тухрăмăр. Çав отчетсенчен эсир хăвăр хуçалăха вăй питĕ нумай хуни курăнать.

Кăçалхи итогсем те лайăх. Сирĕн тырă, чăнах та ĕнтĕ, пирĕннинчен нумай сахалтарах акнă: сирĕн мĕн пурĕ 90 гектар тĕштырă акнă, пирĕн вара кунта манпа пĕрле килнĕ Валентина Миронован бригадинче кăна тĕштырă 160 гектар акнă. Анчах та сирĕн ĕç вăйĕ те, туртăм вăйĕ те сахалтарах вĕт. Эсир гектартан планра кăтартнă 18 центнер вырăнне 25,5 центнер тĕштырă пухса илнĕ, 150 центнер вырăнне 229,3 центнер çĕрулми кăларнă. Çак цифрăсем эсир мĕнле лайăх ĕçленине, фронта апат-çимĕç ытларах парса тăрса пулăшма тăрăшнине кăтартса параççĕ те ĕнтĕ.

Сирĕн колхоз государствăна продуктсем панине кăтартакан пур квитанцисене те эпир пăхса тухрăмăр. Эсир государствăна тата Хĕрлĕ Çар фондне планран ирттерсе тĕштырăпа çĕрулми срокчен панă тата лайăх продуктсем панă. Эсир планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 100 центнер тырă тата 2.000 центнер çĕрулми панă. 1941 çулта нимĕçсем сирĕн яла оккупацилесен, сирĕн колхозри мĕнпур выльăхсене пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă пулин те, эсир хăвăр колхозра пур фермăсене те çĕнĕрен ура çине тăратнă, эсир государствăна кăçалах 9.000 литр сĕт, 1.408 килограмм какай тата 23 килограмм çăм панă.

Эпир выльăх картишĕсенче пуринче те пултăмăр, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне эсир мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслерĕмĕр. Ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне эсир майракаллă шултăра выльăх ĕрчетмелли плана тултарнă, сысна тата кайăк-кĕшĕк ĕрчетмелли плана вара ытлашшипех тултарнă.

Сирĕн колхозра эпир пысăк çитменлĕхсемех тупаймарăмăр. Пĕр тĕлте кăна, шăп та нумаях пулмасть çĕртме туса пĕтернĕ вырăнта, пĕр участокра шăйрăксем хăварнă тата хĕррисене тепĕр хут сухаламан. Çавăн пек ĕçе трактористсенчен йышăнма кирлĕ мар, вĕсене çав участокра тепĕр хут сухалаттармалла пулнă. Эсир Мускавран инçе мар пурăннине тата Мускав сĕт продукчĕсем нумай ыйтнине шута илсе, сирĕн выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерме тăрăшмалла. Тата сирĕн выльăх апатне пурне те пĕр çĕре пухса хуни те пире кăмăла каймарĕ. Пĕр-пĕр инкек-синкек сиксе тухсан, сирĕн выльăх-чĕрлĕхсем пурте апатсăр тăрса юлма пултараççĕ. Выльăх апатне тĕрлĕ çĕре пухса хумалла.

Октябрь вĕçĕнче сирĕн колхоз янă комисси пирĕн патăрта хăнара пулчĕ. Вăл пирĕн пĕтĕм хуçалăха пăхса тухрĕ, колхозниксемпе калаçрĕ, пире питĕ паха сĕнӳсем пачĕ. Эпир кунта тухса килнĕ чухне колхозниксем пире 1945 çулта ăмăртасси çинчен калаçса татăлма хушрĕç. (Алă çупаççĕ). Эсир алă çупни, юлташсем, эсир ăмăрту договорне тăсма килĕшнине кăтартать тесе шутлар.

Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă докладпа приказа вĕренекенсем валли докладсемпе калаçусем иттермелли ПРИМЕРЛĂ ТЕМАТИКА

1. Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă доклад тата приказ—Хĕрлĕ Çарпа совет халăхĕн гитлерла Германие татăкланах çĕмĕрсе тăкассишĕн пыракан кĕрешӳри боевой программи.
2. Отечественнăй аслă вăрçăн тăваттăмĕш çулталăкĕ — совет çĕрне фашистла нимĕç захватчикĕсенчен пĕтĕмĕшпех ирĕке кăларнин çулталăкĕ.
3. Германи икĕ фронт хушшинчи хĕскĕчре.
4. Совет халăхĕн Отечественнăй вăрçăра тунă паттăрла аслă ĕçĕ.
5. Совет хĕрарăмĕсемпе çамрăкĕсен ĕç фронтĕнчи хастарлăхĕпе паттăрлăхĕ.
6. Совет патриотизмĕ — Совет çыннисен фронтри тата тылри паттăр ĕçĕсен çăлкуçĕ.
7. Вăрçă пынă вăхăтра гитлерла Германи моральпе политика тĕлĕшĕнчен поражени тӳсни.
8. Гитлера хирĕçле коалици фрончĕ тĕреклени тата сарăлни.
9. Мирпе хăрушсăрлăх ыйтăвĕ.

ВКП(б) ОБКОМĔН ПРОПАГАНДĂПА АГИТАЦИ ОТДЕЛĔ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ ноябрĕн 13-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла калать:

Союзниксен çарĕсем Нанси хулипе Мец хули районĕнче çаплах наступлени туса пыраççĕ, вĕсем Понт-а-Муссон хулинчен хĕвелтухăçнелле куçнă. Бронетанковăй тата пехота чаçĕсем Дьез хулинчен 7 мильăра ларакан пункт патне çитнĕ. Союзниксен ытти чаçĕсем Шато-Бреан, Бальанс пункчĕсенче тата Шато-Селэн хулинчен çурçĕртерехре тăраççĕ. Бронетанковăй чаçсем Нид Франсе шывĕ урлă каçнă та халĕ Анри районĕнче тăраççĕ.

Кенингсмаркер хули районĕнче союзниксен пехотнăй подразделенийĕсем контратака тунă та хăйсем малтан йышăнса тăнă позицисене каялла туртса илнĕ, Мозель шывĕ çинче, Тионвиль хулинчен анаталла, çĕнĕрен тытса илнĕ укрепленире хăйсен позицийĕсене вăйлăлатнă. Унтан кăнтăртарахра, Сен-Дье пунктĕнчен хĕвеланăçнерехре, союзниксен çарĕсем кăштах малалла куçнă, çавăн пекех Брюйер хулинчен хĕвелтухăçнерехре те малалла кайнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши 750 самолет ытла, 600 истребителе яхăн хӳтĕлесе пынипе, ноябрĕн 10-мĕшĕнче Кельн хулипе Франкфурт хули районĕсенчи аэродромсене, çар транспорчĕ пухăнса тăнă вырăнсене тата промышленность предприятийĕсене тапăннă.

Ноябрĕн 11-мĕшĕ ыран тепĕ чух çĕрле акăлчансен «Москито» йышши бомбардировщикĕсен соединенийĕсем Ганновер хулине тата Хĕвеланăç Германири ытти пунктсене тапăннă.

Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнче

ЛОНДОН, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ ноябрĕн 13-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла калать:

Италире тинĕс хĕрринчи секторта 8-мĕш армири акăлчансен танкĕсемпе пехота чаçĕсем Равенна хулинчен кăнтăртарахри Гиана каналĕ урлă каçса кайнă. Форли хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре те союзниксен çарĕсем, тăшман питех те вăйлă хирĕç тăнине пăхмасăрах, малалла кайнă. Ытти участоксенче улшăнусем пулман.

ЧЕРЧИЛЛЬПЕ ИДЕН ПАРИЖРА ПУРĂННИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Парижран пĕлтернĕ тăрăх, Черчилль, де Голль, Иден тата ытти советниксем икĕ сехет хушши канашланă. Çав канашлура, тенĕ официальнăй пĕлтерӳре, вĕсем пĕрпĕрне хăйсен шухăшĕсене каласа панă.

Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Францире Черчилль премьер-министрпа пĕрле импери генеральнăй штабĕн начальникĕ Алан Брук фельдмаршал тата çар кабинечĕн секретарĕн çар помощникĕ Исмей генерал пур.

ГЕРМАНИ АНГЛИЕ ХИРĔÇ ИНÇЕНЕ ВĔÇЕКЕН РАКЕТĂСЕМПЕ УСĂ КУРНИ ÇИНЧЕН ЧЕРЧИЛЛЬ КАЛАНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, премьер-министр Черчилль ноябрĕн 10-мĕшĕнче нимĕçсем Англи çине инçене вĕçекен ракетăсем яни çинчен пĕрремĕш хут официальнăй йĕркепе каласа панă. Черчилль çапла каланă:

«Ракетăсенче сирпĕнтерекен япаласем самолет-снарядсенчи чухлех. Анчах та вĕсен çурăлса кайиччен шăтарса тухас вăйĕ самолет-снарядсеннинчен ытларах. Çавăн пирки вĕсем шăтарнă шăтăксен çывăхĕнчи япаласене ытларах ишеççĕ. ракетăсем сирпĕнсе кайнипе пулнă хумсем вара самолет-снарядсеннинчен сахалтарах сиен кӳреççĕ. Çав ракетăсем 60—70 миля çӳле (стратосфера таранах) хăпараççĕ те унта сасă сарăлнинчен хăвăртрах вĕçеççĕ. Вĕсем ытла та хăвăрт вĕçнине пула, хальхи вăхăтра çынсене вĕсем çывхарни çинчен вăхăтра пĕлтерме май çук. Анчах та çав ракетăсен хăрушлăхĕ çинчен ӳстерсе калама та кирлĕ мар.

Халиччен ракетăсем нумай вĕçсе килмен тата вĕсем пысăках сиен тăвайман. Англи çине Вальхерен утравĕ çинчен темиçе ракета кăларса яначчĕ. Халĕ çав утрав пирĕн алăра. Ракетăсем яракан ытти районсене те пирĕн çарсем вăхăт çитсен йышăнĕç. Анчах та эпир—тăшман çав ракетăсене тата инçерех вырăнсенчен кăларса яма пултармĕ, тесе калаймастпăр. Тепĕр енчен илсе каласан, тăшман территорийĕнче фронтран инçерех вырăнта ракетăсем яма çĕнĕ станци тăвас пулсан, союзниксен наступлени туса пыракан çарĕсем ăна та тытса илĕç».

ШВЕЦИ ГЕРМАНИЕ ПРОТЕСТ ПАНĂ

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Германи Швеци правительствине çапла пĕлтернĕ: Балтика тинĕсĕ пĕтĕмĕшпех вăрçă ĕçĕсем пыракан вырăн шутланать, тенĕ. Нимĕçсем Швеци территорине кĕрекен шывсен тулашĕнче кирек мĕнле суднăсене те, çав шутра пулă тытаканнисене те, çӳретме чарма хушаççĕ.

ЛОНДОН, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Стокгольмран çапла пĕлтерет: «Балтика тинĕсĕ вăрçă ĕçĕсем пыракан вырăн пулса тăрать тата çав вырăнта тĕл пулакан суднăсене пурне те çийĕнчех тупăсемпе переççĕ тесе Германи каланине паян Швеци йышăнмасăр сирсе янă. Германин Стокгольмри посольствине панă нотăра Швеци çапла калать: Швеци правительстви Швеци суднисене кирек мĕнле майпа та тапăннăшăн Германи правительстви «пĕтĕмпех ответлă пулса тăрать» тесе шутлать, тенĕ.

СТОКГОЛЬМРА НИМĔÇСЕН «ТУРИЗМ БЮРОВĔН» ДИРЕКТОРНЕ ШПИОНЛА ĔÇСЕМ ТУНĂШĂН ТЫТСА ХУПНĂ

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтонбладет» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсен Стокгольмри туризм бюровĕн директорне Госслер баронна, шпионла ĕçсем тунă тесе айăпласа, Стокгольм полицийĕ тытса хупнă.

ГИТЛЕРЛА ЙĔКЕ-ХУРЕСЕМ ПУТАКАН ГЕРМАНИ КАРАПĔ ÇИНЧЕН ТАРАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). «Пур ла Виктуар» хаçатра Табуи статьине пичетлесе кăларнă. Çав статьяра çапла каланă: хальхи вăхăтра гитлеровецсен нумай руководителĕсем, Германи поражени тӳсессине ăнланса илсе, нейтральнăй çĕршывсене тарма хатĕрленеççĕ, хăйсемпе пĕрле укçа нумай илсе каясшăн. Табуи каланă тăрăх, гитлеровецсене тарма пулăшакан центрсенчен пĕри Дрезден хулинче Мартин Гамич ятлă çыннăн çуртĕнче вырнаçнă. Табуи малалла çапла çырать: Гамич кашни кунах Германин подводнăй лодкисен командирĕсемпе çыхăну тытать, çав лодкăсем паллă гитлеровецсене ют çĕршывсене тарма пулăшаççĕ. Табуи каланă тăрăх, тарма хатĕрленекен çынсем хушшинче «гаулейтер» Генлейн, «Богемипе Моравии протекторачĕн» статс-секретарĕ Франк, Кригк доктор тата ыттисем те пур. Табуи çапла калать: çав çынсем нейтральнăй çĕршывсене темиçе миллион марка укçа тата хаклă япаласем нумай куçарнă. Хăшпĕр гитлеровецсем Швейцарие кайма суя документсем туянаççĕ.

ВАН ЦЗИН-ВЕЙ ВИЛНИ

ТОКИО, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ноябрĕн 10-мĕшĕнче Японири Нагоя хулинче Нанкин «правительстви» текен правительствăн пуçлăхĕ Ван-Цзин-вей вилнĕ. Ван Цзин-вей вырăнне Чань Гун-бо йышăннă.

РУМЫНИН ЮСТИЦИ МИНИСТРĔ ПАТРАШКАНУ ГОСУДАРСТВО УЧРЕЖДЕНИЙĔСЕНЕ ТАСАТАССИ ÇИНЧЕН

БУХАРЕСТ, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Пур хаçатсем те юстици министрĕн Патрашканун заявленине пичетленĕ. Патрашкану унта çапла калать: манăн министерствăн тĕп задачи—государство учрежденийĕсене халех тасатма тытăнасси пулса тăрать. Тасату вак служащисене çеç мар, ответлă вырăнсенче ĕçлекен служащисене те пырса тивет, тенĕ.

ВЕНГРИН ЫЛТТĂН ЗАПАСНЕ ГЕРМАНИЕ ТУРТТАРСА КАЙНĂ

ПАРИЖ, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио çапла пĕлтерет: кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, Венгрин ылттăн запасне Германие турттарса кайнă. Венгрири чи пысăк промышленность предприятийĕсен оборудованине те Германие турттарса каяççĕ.

ГИТЛЕР ЧИРЛЕНĔ ТЕНĔ ХЫПАРСЕМ

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтонбладет» хаçат çапла çырать: «Пĕлекен çынсем каланă тăрăх, Гитлер чирлесе ӳкнĕ. çав чир ăна каласма кансерлет тата унăн ӳчĕн сылтăм пайне хускалми туса хунă. Германин ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви нимĕçсен ют çĕршывсенчи миссийĕсене çапла хушнă: кам та пулсан Гитлер сывлăхĕ çинчен ыйтсан, Гитлерăн сывлăхĕ лайăх тесе калăр, тенĕ».

УРАЛМАШЗАВОДĂН ПЫСĂК ÇĔНТЕРĔВĔ

Уралмашзавод коллективĕ продукци туса кăлармалли çулталăкри плана, хак енчен шутласан, тултарнă. Пĕлтĕрхи шайĕнчен ĕç тухăçлăхĕ кăçал 40 процент ӳснĕ. Продукцин хăйне ларакан хакне чакарнипе пула, кăçал 9 уйăх хушшинче 40 миллион тенкĕ ытла услам илнĕ. Рационализациллĕ сĕнӳсене пурнăçа кĕртнипе пула çеç 21.600 пин тенкĕ перекетлесе хăварнă. Заводри рабочисем, инженерсем тата служащисем тăваттăмĕш квартăлта сĕнтерӳ фондне планран ирттерсе 12 миллион тенкĕлĕх продукци туса пама йышăннă. (ТАСС).

«БАУМАНСКАЯ» СТАНЦИН ЗАЛĔ ĔÇЛЕМЕ ПУÇЛАНĂ

Метро тăвакансем Октябрьти Аслă Революци 27 çул тултарнине производствăра пысăк ситĕнӳ тунипе кĕтсе илнĕ. 8 уйăх хушши ĕçленĕ хыççăн вĕсем «Бауманская» станцин вăтаçĕрти залне туса пĕтерсе ĕçе янă. Архитектура енчен тата усă курнă материалсен пуянлăхĕ енчен илсен, çав станци Мускав метрополитенĕн чи лайăх станцийĕсенчен пĕри пулса тăрать.

Зала архитектура академикĕн Иофанăн тата архитекторăн Зенкевичăн проекчĕ тăрăх тунă. Çав проектăн тĕп теми—вырăс халăхĕн революциллĕ йăлисем тата хальхи паттăрлăх. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительне секретарен — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1, Управления полиграфпро... при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.

НТ 00703